• ХАЛЬХИ ЧĂВАШ ÇЫРАВÇИСЕМ

# ХВЕТĔР УЯР

**(Федор Ермилович Афанасьев)**



1914 çулхи ака уйăхĕнче Самар облаçĕн Исаклă районĕнчи Сухари-Матак ятлă ялта çуралнă. (Ял витĕр чĕлтĕртетсе юхса иртекен пĕчĕк шыв шăрăх çулсеенче пуçĕпех типсе ларнăран ăна çапла ят панă-мĕн.) Хветĕрĕн ашшĕпе амăшĕ сĕм хут пĕлмен хресченсем пулнă. Тăвата пиччĕшĕ те пуçламăш шкула пĕрер-икшер хĕл çеç çÿрекеленĕ.

Таçтан пуçланнă-çке Хветĕрĕн вĕренес шухăш, вăл мĕн пĕчĕкрен тытăнса паян кунччен вĕренесшĕн çуннă. Халĕ те пулин çав шухăшпа пурăнать. Кашни пушă вăхăтра ун аллинче е кĕнеке, е ручка. Вуламан кĕнекесем те нумай тĕнчере, çырмаллисене те çырса пĕтерес çук пуль, шел. Чăваш ĕçĕ вилсен те виçĕ кунлăх юлать тенĕ те ара.

Ялти пуçламăш шкулта вĕреннĕ Хветĕр. Унтан Самар хулинчи иккĕмĕш сыпăклă Чăваш шкулне 5-мĕш класа кĕнĕ. Вăл шкула хупсан, вербовкăпа Инçет Хĕвелтухăçне кайнă. Хабаровск хулинче педтехникумра, Амур шывĕ хĕрринчи Благовещенск хулинчи пединститутра, Китай чиккинче, вĕреннĕ. Шупашкара килсен те вĕренме пăрахман. Калавсемпе повеçсем çырма тытăннă, кĕнекесем кăларма пуçланă, Хветĕртен ФЕДОР ЕРМИЛОВИЧ пулса тăнă.

Виçĕ ĕçе юратнă вăл хăйĕн пурнăçĕнче. Пĕрне асăнтăмăр: вĕренесси терĕмĕр. Кĕнекесем вуласси те çавăнта кĕрет. Лайăх кĕнекесене пуçтарма юрататъ Хветĕр Уяр. Килĕнче унăн пуян библиотека. Çыру ĕçĕнче кирлĕ кĕнекесем, энциклопедисем, словарьсем — пурте ал айĕнче унăн.

Çыравçăн иккĕмĕш юратăвĕ — çул çÿресси. Малтан вăл Жюль Верн, Джек Лондон, Майн Рид, Фенимор Купер, Даниель Дефо («Робинзон Крузо» авторĕ), Вальтер Скотт, Стивенсон кĕнекисене каçса кайса вуланă-ха. Унччен çуралнă ялтан ниçта тухмасăр тенĕ пек пурăннă ача кĕнекесем вуланăçем тĕнче аслинчен тĕлĕне пуçланă. Ара унта кашни халăх хăй пĕлнĕ пек пурăнать мар-и? Вĕçене мĕнле çитсе курмалла? Ним пĕлмесĕр пурăнса ирттерме этем чĕлхесĕр мар-çке. Анчах çамрăк чух укçа ниçтан татса илме çук. Ÿсерехпе çемье хутшăнма тытăнать, ăна тăрантармалла, тумлантармалла. Çапах йÿнеçкелеме пултарнă писатель. Малтан вĕсем, мăшăрĕпе иккĕшĕ, Болгарие кайса килнĕ. Унтан Венгрире пулса пурнă Уяр.

Ку икĕ халăхĕ те тахçан авал, пин çулсем каялла, е пирĕн халăхăн тăхăмех, е пирĕн халăхпа юнашар пурăннă пулнă.

Хамăр çĕршывра писатель çитсе çаврăнман кĕтес сахал юлнă пуль, ăна Уяр кĕнекине вулакансем лайăх астăваççĕ. (Сăмахран, «Сахалинти çуркунне», «Пирĕн енче», «Тăван çĕршыв тăрăх», «Пăлан йĕрĕпе».)

Каярахпа Федор Ермилович ăшă океан варринчи Шри-Ланкана (1972 çулччен ăна Цейлон тетчĕç), Индие, Сингапура, Малайзие кайса курса çÿренĕ. Çула май Иранпа Пакистана кĕрсе тухнă. Киле таврăнсан, каллех кĕнеке çырса кăларнă. («Чăваш çынни инçетри çĕршывсенче курса çÿрени». «Ялав» журнал хушăм кăларăмĕ.)

Çыравçăн виççĕмĕш юратăвĕ — сĕтел хушшинче ĕçлесе ларасси-мĕн. Хальчен вăл çирĕме яхăн кĕнеке çырса кăларнă. Вăл шутра виçĕ роман, çич-сакăр повесть, калавсемпе тĕрленчĕксем чылай. Тăвата кĕнекине Мускавра вырăсла куçарса пичетленĕ. Ытти халăхсен чĕлхисене куçарнисем те пур.

Чăваш халăх писателĕ Хветĕр Уяр иртнĕ Аслă вăрçа хутшăннăшăн икĕ орденпа темиçе медаль илме тивĕç пулнă.